Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Гордеева Светлана Денисовна

## Книга: Верить в чудеса = Тĕлĕнтермĕшсен тĕнчи

## Стихотворение: Кушак тусăм

Васук ятлă ман кушакăм,
Усăлма пĕрле тухать.
Кăсăкланчĕ пĕр юлташăм:
«Кам ăна килте пăхать?»
– Нумай мар чăрмавĕ, – тетĕп, –
Питĕ çăмăл унпала:
Эпĕ усăлса çӳретĕп –
Сĕт аннен туянмалла.
Кушакпа хамах вылятăп,
Вырттаратăп çывăрма.
Аннене вара шанатăп
Хамăр хыççăн пуçтарма.
Лăпкама та ĕлкĕретĕп,
Хам туратăп ун çăмне.
Такам мар, хам ӳкеретĕп
Альбома кушак сăнне.
Тусăма аннеçĕм темшĕн:
«Чупкăн!» терĕ пĕринче.
Васукпа эпир аннешĕн
Ик ача вырăнĕнче.
Кăларса килтен ярасшăн,
Кирлĕ мар ăна Васук.
Мĕншĕн çилленме пăхасшăн –
Ăнланма çук тепĕр чух.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.